# Икĕ ентеш юррисем

*Нумаях пулмасть Шупашкарта Юрий Кудаков композиторпа Ольга Архипова сăвăç çырнă юрăсен пуххи пичетленсе тухрĕ. Кĕнекен ячĕ – «Атте килĕ эс – шур хурăн».*

Çĕнĕ кĕнеке



Авторĕсем – иккĕшĕ те Çĕмĕрле районĕнчен: Юрий Дмитриевич Кудаков Хутар ялĕнче çуралса ӳснĕ, Канашри педагогика училищинчен тата Хусанти педагогика институчĕн музыка уйрăмĕнчен вĕренсе тухнă, кайран çур ĕмĕре яхăн Шупашкарти И.Я. Яковлев ячĕллĕ педагогика институтĕнче студентсене баянпа аккордеон класĕнче аслă пĕлӳ панă. Паян паллă педагога ун патĕнче вĕреннĕ çĕршер çын тав тăвать, мĕншĕн тесен вĕсене педагогика ăслăлăхĕсен кандидачĕ, Чăваш Республикин тата Раççей Федерацийĕн культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Юрий Кудаков доцент анлă тавракурăм тата тарăн пĕлӳ парнелĕ, музыка инструменчĕсен вăрттăнлăхĕсемпе тĕплĕн паллаштарнă.

Унсăр пуçне, пурте пĕлетĕр ĕнтĕ, Юрий Дмитриевич - пĕтĕм халăх хисеплекен композитор. Вăл кĕвĕленĕ «Хурлăхан», «Кăвак чечексем», «Чăваш çĕрне килсе курсамăр», «Çулçă тăкăнать кĕркунне», «Пиçет пилеш, пиçет палан», «Пире тăван кĕтсе тăрать» тата ытти вуншар çепĕç хайлав чăн-чăн халăх юррисем пулса тăчĕç. Ахальтен мар ĕнтĕ композиторăмăр Çĕçпĕл Мишши ячĕллĕ преми хисеплĕ ятне тивĕçнĕ. Талантлă баянçă пулнă май, Юрий Дмитриевич Мефодий Денисов, Тамара Чумакова, Иван Христофоров, Зоя Лисицина, Тамара Гурьева пек юрă ăстисемпе пĕрле çĕршывĕпех çӳренĕ, халăха чаплă концертсемпе савăнтарнă.

Нумаях пулмасть композиторăмăр юбилей уявне ирттерчĕ, суйласа илнĕ юррисенчен чечек çыххи туса тăван республикăна парнелерĕ. Паллах, уяв концертĕнче Ольга Архипова сăввисемпе çырнă юрăсем те сумлăн янрарĕç.

Çавна май Ольга Александровна Архипова пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинче те кĕскен те пулин чарăнса тăрар-ха. Çĕнтерӳллĕ хăватпа кĕнеке авторĕ кăçал 94 çулне паллă тăвать. Унăн пултарулăхĕ чылай çул ĕнтĕ тĕрлĕ енлĕ аталанса пырать: пултаруллă вĕрентекен, çыравçă, сăвăç, фольклорист, общество деятелĕ, ĕçпе вĕрентӳ тата тыл ветеранĕ, вăрçă ачи. Çак сумлă та пысăк тавра курăмлă чăваш хĕрарăмĕ хай вăхăтĕнче темĕнле йывăр лару-тăрура та вутра та çунман, шывра та путман, нимĕнрен те хăраман.

Çураласса сăвăçăмăр Красноармейски тăрăхĕнчи Тусай ялĕнче хастар колхозниксен кил-йышĕнче 1929 çулта çуралнă. Тусай ялĕ Трак тăрăхĕнчи паллă ялсенчен пĕри шутланать. Чăвашсен пинпин ялĕнчен пĕри вăл. Авалхи ватă ял. Ольга Александровнăн ачалăхĕ колхозсем йĕркеленнĕ пăтравлă вăхăтпа, Тăван çĕршывăн аслă вăрçин 1941–1945 çулĕсемпе пĕр килнĕ. Ачалăх саманчĕпе киленсе, выляса-кулса пурăнма майĕ те пулман. Вăрçă çулĕсенчи йывăр пурнăç, пысăк çухату, канăçсăр йывăр ĕçсем, хырăм выççи, ачалăха туртса илнĕ асаплă кунсем, вăрçă ачине, пурнăç çине ӳссе çитĕннĕ çынсем пек тарăннăн пăхма, шухăшлама вĕрентнĕ.




Вăтам пĕлӳ илнĕ хыççăн Ольга комсомолка Шупашкарти педагогика институчĕн чăваш чĕлхипе литературин уйрăмне вĕренме кĕрет. Унпа пĕрле вĕренекенсем хушшинче мĕнле маттур студентсем пулнă-ха тата: кайран паллă чĕлхеçе тухнă Анатолий Горшков, Александр Галкин поэт, Николай Терентьев писатель-драматург, Зоя Нестерова çыравçă, Аркадий Малов куçаруçă, драматург…

Мĕнлерех ăсчахсем пулас учительсен ăс-хакăлне туптаман-ши тата! Василий Георгиевич Егоров, Михаил Яковлевич Сироткин, Семен Петрович Горский паллă профессорсем вĕрентнĕ вĕсене. Ĕмĕр манми хальхи паллă чăваш чĕлхеçисемпе сăмахçисем тăван чĕлхе, тăван сăмах пархатарне ĕмĕрлĕхех чун-чĕрене витернĕ. Института Çемен Элкер, Петĕр Хусанкай, Стихван Шавли, Аркадий Ĕсхĕл тăтăшах пырса çӳренĕ, хайсен çĕнĕ хайлавĕсемпе паллаштарнă. Унашкал хавхалануллă сывлăш такама та çунатлантарса ярĕ. Епле чăтăнха ĕнтĕ çавнашкал лару-тăрура сăвă е калав çырса пăхмасăр? Шăпах çав хăват асамлăхĕ сăвă тĕнчине çаватса кĕнĕ те ĕнтĕ Ольгăна. Сăмах хĕлхемĕ алла калем тыттарать, чуна çĕнĕ шухăшпа çунатлантарать. Вĕренӳре пуçаруллăскер, хăй те сисеймен-тĕр, сăвă калăплас тĕнчене вирхĕнсе кĕрет. Купăс та, гитара та калать Тусай хĕрĕ, хорта та юрлать, вĕренӳре те малта пырать.

Диплом илнĕ хыççăн çамрăк учительница пĕр вăхăт Елчĕк тăрăхĕнче, унтан вăтăр икĕ çул хушши Çĕмĕрле районĕнчи Юманай шкулĕнче вĕрентет. Шкул директорĕ, Элĕк енчи Тури Выл каччи Севастиан Архипов, вăрçă паттăрĕ, унăн мăшăрĕ пулса тăрать. Ольгăпа Севастиан Архиповсем патне, Юманай шкулне тăван халăхăмăр паллă çыннисем Никифор Васанкка поэт, Петр Сизов ӳнерçĕ, Совет Союзĕн геройĕ Федот Орлов летчик, Герасим Харлампьев-Пилеш çыравçă-ӳнерçĕ, Александр Артемьев Чăваш халăх писателĕ тăтăшах пырса çӳренĕ. Вĕсем Архиповсене пурнăç тĕллевĕсене пурнăçлама хавхалану кӳнĕ. Ольга Александровна пурнăç тăршшĕпех чăвашлăхшăн, ăна сӳнме парас мар тесе нумай вăй хунă, чунне парса ĕçлеме тăрăшнă. Юманай шкулĕнче вăл йĕркелесе янă чăваш чĕлхипе литература кабинетне пырса кĕрсенех чăвашлăх тĕнчине лекнĕн туйăннă. Ачасене «Ылтăн тата хурçă перо» тăван чĕлхепе литература кружокне явăçтарнă: сăвăсем, тĕрлĕ калавсем çырма вĕрентнĕ. Пиçсе çитнĕ хайлавсем «Çамрăк хунавсем» литература альманахĕнче, «Пионер сасси», /«Тантăш»/ хаçатра, «Хатĕр пул» /«Самант»/ журналта пичетленнĕ. Пултаруллă педагога Шупашкарти вĕрентекенсен пĕлĕвне ӳстерекен института лекцисем вулама час-часах чĕннĕ. Тăван халăх йăли-йĕркине аталантарас, юрри-ташшине упраса хăварас тĕллевпе шкул ачисемпе, ял яш-кĕрĕмĕпе фольклор ушкăнĕ йĕркеленĕ. Вăл вĕренекенсемпе пĕрле Çĕмĕрле тăрăхĕнчи ял халăхĕнчен ваттисен сăмахĕсем, такмаксем, каларăшсем, авалхи юрăсем мĕн чухлĕ пухман-ши! Учительница пуçарăвĕпе шкулта вĕренекен ачасен ашшĕ-амăшне явăçтарса чăваш халăх уявсем тата тĕрлĕ мероприяти ирттернĕ.

Пурăна киле шăпах çак вучахран шăранса тухаççĕ те ĕнтĕ паллă чĕлхеçĕсем, артистсем, фольклористсем, чăваш ӳнерçисемпе культура ĕçченĕсем. Ольга Архиповăн вĕренекенĕсен хушшинче Чăваш Республикинче, Раççейре паллă çын пулса тăнисем чылаях. Вĕсем йышĕнче çар çыннисем те, ученăйсем те, патшалăх тытăмĕнчи ертӳçĕсем те, хуçалăх ĕçĕнчи пысăк ăстасем те пур.

Паян Ольга Александровна Архипова тивĕçлĕ канура, Çĕмĕрле районĕнчи Юманай ялĕнче пурăнать. Ăна çĕр çула пуснă тесе калама питĕ йывăр. Сумлă ветеран чăннипех те пуян, нумай енлĕ, интереслĕ пурнăçпа пурăнать. Вăл – сăвăçă, вăл – çыравçă. Хайĕн сăввисенче çамрăк ăрава тăван чĕлхе вăйне туйма, чăвашлăха упрама, юратнă тăван халăхпа пĕрле пурăнма вĕрентет. Çирĕм виçĕ юрă кĕвĕлерĕ кӳршĕ ял композиторĕ Юрий Кудаков унăн сăввисемпе. Çав юрăсенче – тăван тавралăх илемĕ, чун хĕлхемĕ, пурнăç таппи, çамрăк ăру аталанăвĕ.

«Атте килĕ эс – шур хурăн» çĕнĕ кĕнекене, икĕ ентеш парнине, халăх Шупашкарти Наци библиотекинче пухăнса пахаларĕ. Поэтсем те, тĕпчевçĕсем те, «Сăрнай» халăх юрă ушкăнĕ те пулчĕç унта. Кĕнекери юрăсем пĕрин хыççăн тепри янрарĕç, тăвăллăн алă çупни кăмăла çĕклерĕ. Акă вăл, икĕ пултаруллă ентешĕн чун-чĕре пархатарĕ! Хăтлав ларăвĕнче филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ Александр Мефодьев, кĕнеке рецензенчĕ Альбина Юрату, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ Геронтий Никифоров, «Çулăм» ансамбль ертӳçи Георгий Хавал, Николай Эриванов композитор, кĕнеке авторĕ Юрий Кудаков тата ыттисем тухса калаçрĕç, юрăсен пуххи, кĕвĕ нотисемпе кăларнăрскер, шкулсемшĕн те, библиотекăсемшĕн те, пултарулăх коллективĕсемшĕн те усăллă пулнине палăртрĕç.

«Атте килĕ эс – шур хурăн» кĕнекене вулакансем юратса кĕтсе илессе чунтанах шанатпăр. Сăпайлă та çивĕч ăслă, пултаруллă ентешĕмĕрсене Ольга Архипова сăвăçпа Юрий Кудаков композитора çирĕп сывлăх, çĕнĕ вăйхал, пултарулăхра татах сулмаклă утăмсем, пысăк çитĕнусем тума сунатпăр. Çул тӳпе те пиллет, тăван халăх та ырлăх-сывлăх сунать сире, хисеплĕ вĕрентекенĕмĕрсем!

Ăнăçуллă пултăр «Атте килĕ эс – шур хурăн» çĕнĕ кĕнеке вĕçевĕ!

**Юрий СЕМЕНТЕР,**
**чăваш халăх поэчĕ.**